ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ КАНАШЁН ДЕПУТАЧЁСЕН СУЙЛАВЕ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен" 2006 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 9 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 67, 69 №-сем; 2007, 73 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 85, 87 №-сем; 2011, 89–91 №-сем; 2012, 92 (I том), 95 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2014, 9 №; 2015, 5 №; 2016, 4, 6 №-сем; 2017, 3 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 11^1 статьяра:

а) ятне çакăн пек çырса хурас:

"11^1 статья. **Çӳллĕ шайри хатĕрленӳ е майсăр лару-тăру режимне, вăрçă йĕркине вăя кĕртнĕ чухне суйлав ирттересси**";

ă) çакăн пек çырса 5-мĕш пай хушса хурас:

"5. Федерацин "Вăрçă йĕрки çинчен" 2002 çулхи кăрлач уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 1-ФКЗ №-лĕ конституци саккунĕпе килĕшӳллĕн вăрçă йĕркине кĕрт-

нӗ чухне, вăл Чăваш Республикин территорийӗнче те вăйра тăрать, Чăваш Республикин Патшалăх Канашӗн депутачӗсен суйлавне хатӗрленес тата ирттерес ӗçе Федераци саккунӗн 10^1 статйин положенийӗсене шута илсе тăваççӗ.";

2) 15 статьяра:

а) 12^1-мӗш пайăн иккӗмӗш абзацне "участокри комисси пичетне" сăмахсем хыççăн ", е асăннă копие электронлă майпа туса хатӗрлеме пултараççӗ, ун пек чухне ăна участокри комисси председателӗ, секретарӗ электронлă майпа алă пусса ӗнентереççӗ" сăмахсем хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса 14^3-мӗш пай хушса хурас:

"14^3. Федераци саккунӗпе килӗшӳллӗн Федераци саккунӗн 64 статйин 17-мӗш пункчӗпе тата (е) 66 статйин 19-мӗш пункчӗпе пăхса хăварнă сасăлава ирттернӗ чухне суйлавçăсен списокӗсене Раççей Федерацийӗн Тӗп суйлав комиссийӗ çирӗплетнӗ йӗркепе туса хатӗрлеççӗ.";

3) 17 статьяра:

а) 4-мӗш пая çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Федераци саккунӗн 64 статйин 17-мӗш пункчӗпе тата (е) 66 статйин 19-мӗш пункчӗпе пăхса хăварнă сасăлава ирттерме Чăваш Республикин Суйлав комиссийӗ суйлав участокӗсем туса хума пултарать.";

ă) çакăн пек çырса 4^1-мӗш пай хушса хурас:

"4^1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашӗн депутачӗсен суйлавне ирттернӗ чухне Чăваш Республикин Суйлав комиссийӗн йышăнăвӗ тăрăх Чăваш Республикин территорийӗн тулашӗнче суйлавçăсене сасăлама çав суйлавçăсем суйлав правипе ирӗклӗн усă куракан суйлав участокӗсене туса хума пултараççӗ. Чăваш Республикин Суйлав комиссийӗ участокри суйлав комиссийӗсен (вӗсене çак пайпа пăхса хăварнă суйлав участокӗсенче йӗркеленӗ) ӗçне ертсе пыма пӗр е темиçе территори суйлав комиссийӗ туса хума пултарать. Асăннă суйлав участокӗсене туса хурас, çав участоксенче суйлав комиссийӗсене йӗркелес (асăннă участоксен участокри суйлав комиссийӗсен полномочийӗсене Раççей Федерацийӗн ытти субъекчӗсенче туса хунă участокри суйлав комиссийӗсене парас), суйлавçăсен списокӗсене тăвас, сасăлав пӗтӗмлетӗвӗсем çинчен калакан протоколсене хатӗрлес (çавнашкал сасăлав пӗтӗмлетӗвӗсен даннăйӗсене туса хатӗрлес), сасăлав пӗтӗмлетӗвӗсене палăртас, суйлав результачӗсене палăртас ӗçӗн уйрăмлăхӗсене, çавăн пекех Федераци саккунӗпе килӗшӳллӗн кăтартнă суйлав участокӗсенче сасăлава хатӗрленес тата ирттерес ӗçӗн ытти уйрăмлăхӗсене Раççей Федерацийӗн Тӗп суйлав комиссийӗ палăртать.";

4) 18 статьян 12-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"12. Федераци саккунĕн, ытти саккунăн положенийĕсене пурнăçа кĕртессине тивĕçтерес тĕллевпе Чăваш Республикин патшалăх органĕсем (малалла – патшалăх органĕсем), Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, Чăваш Республикин патшалăх учрежденийĕсем тата Чăваш Республикинчи муниципалитет учрежденийĕсем (малалла – патшалăх тата муниципалитет учрежденийĕсем), çавăн пекех вĕсен должноçри çыннисем комиссисене вĕсен полномочийĕсене пурнăçламашкăн пулăшма, сăмахран, вĕсене кирлĕ пӳлĕмсене (пӳлĕмсене территорири, округри тата участокри суйлав комиссийĕсене уйăрса панă чухне – суйлав комиссийĕсенчен пӳлĕмсемпе усă курма тăкакланă укçана тата коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳленĕ укçана саплаштарма ыйтмалла мар), çав шутра участокри суйлав комиссийĕсен суйлав документсене (кăтартнă документсене архива париччен е тата саккунпа çирĕплетнĕ упрамалли срок тухсан пăрахăçа кăлариччен) тата технологи оборудованине упрамалли пӳлĕмсене тӳлевсĕр пама, уйăрса панă пӳлĕмсене тата кăтартнă документацие тата оборудование хураллассине тивĕçтерме, çавăн пекех транспорт хатĕрĕсене, çыхăну хатĕрĕсене, техника оборудованине тӳлевсĕр уйăрса пама тивĕçлĕ.";

5) 22 статьяра:

а) çакăн пек çырса 1^{1-1}-мĕш пай хушса хурас:

"1^{1-1}. Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава тивĕçтерме Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ участокри ятарлă суйлав комиссийĕсем туса хума пултарать. Çавнашкал комиссисене айăпланма пултаракан çынсене тата айăпланакан çынсене хупса усрамалли вырăнсенче ĕçлекен çынсен шутĕнчен туса хума пултараççĕ, е тата çавнашкал участокри суйлав комиссийĕсен полномочийĕсене участокри ытти суйлав комиссийĕсене пама пултараççĕ.";

ă) 2-мĕш пайра "Федераци саккунĕн 27 статйин 1^{1}-мĕш пункчĕпе, çак статьян 1^{1}-мĕш пайĕпе" сăмахсене "Федераци саккунĕн 27 статйин 1^{1}-мĕш е 1^{2-1}-мĕш пункчĕпе, çак статьян 1^{1}-мĕш е 1^{1-1}-мĕш пайĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

6) 23 статьян 4-мĕш пайне çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Федераци саккунĕн 27 статйин 1^{2-1}-мĕш пункчĕпе, çак Саккунăн 22 статйин 1^{1-1}-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн туса хунă участокри суйлав комиссийĕн председательне комиссин татса паракан сасă правиллĕ членĕсен шутĕнчен

уйăрса лартаччĕ тата Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕн йышăнăвĕпе должноçран хăтараччĕ.";

7) 35 статьяна çакăн пек çырса 22-мĕш пай хушса хурас:

"22. Регистрациленĕ кандидатăн судпа айăпланни тупăннă чухне, çав кандидатăн судпа айăпланни тупăннă кун хыççăнхи кун вырăнти вăхăтпа 18 сехетрен кая юлмасăр ăна регистрациленĕ суйлав комиссине асăннă судпа айăпланни тупăнни çинчен калакан сведенисене çырса тăратмалла. Кандидатăн çав судпа айăпланни тупăнни çинчен калакан сведенисене Федераци саккунĕн 39 статйин 2-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн кандидат ячĕпе ĕçлеме пултаракан çынсем те тăратма пултараччĕ.";

8) 39 статьян 5-мĕш пайне "Шаннă çынсен полномочийĕсем" сăмахсем хыççăн ", çав шутра Федераци саккунĕн 30 статйин 1-мĕш пунктĕнче кăтартнисем," сăмахсем хушса хурас, "вĕçленеççĕ" сăмах хыççăн "агитаци тапхăрĕ вĕçленнипе пĕрле, çавăн пекех срокчен" сăмахсем хушса хурас;

9) 60 статьяра:

а) 15-мĕш пая "бюллетеньсем панă" сăмахсем хыççăн "Федераци саккунĕн 64^1 статйипе килĕшӳллĕн дистанциллĕ электронлă сасăлава ирттернĕ тĕслĕхсĕр пуçне" сăмахсем хушса хурас, çакăн пек çырса виççĕмĕш çĕнĕ предложени хушса хурас: "Ун пек чухне панă бюллетеньсен хисепне Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕн йышăнăвĕпе палăртаччĕ, федераци саккунĕпе урăххине палăртман пулсан.";

ă) çакăн пек çырса 20^1-мĕш пункт хушса хурас:

"20^1. Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава ирттернĕ чухне, сасăлава Федераци саккунĕн 19 статйин 5^1-мĕш пунктĕнче, çак Саккунăн 17 статйин 4^1-мĕш пайĕнче кăтартнă суйлав участокĕсенче ирттернĕ чухне суйлав документчĕсене, бюллетеньсене кĕртсе, участокри суйлав комиссийĕ хăй хатĕрлеме пултарать, ун пек чухне Федераци саккунĕн 63 статйин 3-мĕш пункчĕн, çак статьян 3-мĕш пайĕн положенийĕсемпе усă курмаччĕ. Суйлав документчĕсене туса хатĕрлесси çинчен калакан йышăнăва, бюллетеньсен кирлĕ тиражне тата туса хатĕрлемелли срокне кăтартса, участокри суйлав комиссийĕ çӳлерех тăракан суйлав комиссийĕпе килĕштерсе тăвать.";

10) 64 статьяна çакăн пек çырса 30-мĕш пай хушса хурас:

"30. Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава ирттернĕ чухне участокри суйлав комиссийĕн сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсем

çинчен калакан протоколне хатĕрлемелли (çавнашкал сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен калакан даннăйсене пухмалли) уйрăмлăхсене Раççей Федерацийĕн Тĕп суйлав комиссийĕ палăртать.";

11) 65[1] статьяна çакăн пек çырса 18-мĕш пай хушса хурас:

"18. Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава ирттернĕ чухне Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлавăн пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен калакан даннăйсене шута илсе пĕтĕмĕшле таблицăна тата сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен калакан протокола территорири суйлав комиссийĕ хатĕрлемелли уйрăмлăхсене Раççей Федерацийĕн Тĕп суйлав комиссийĕ палăртать.";

12) 66 статьяна çакăн пек çырса 10-мĕш пай хушса хурас:

"10. Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава ирттернĕ чухне Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлавăн пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен калакан даннăйсене шута илсе пĕтĕмĕшле таблицăна тата сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен калакан протокола округри суйлав комиссийĕ хатĕрлемелли уйрăмлăхсене Раççей Федерацийĕн Тĕп суйлав комиссийĕ палăртать.";

13) 67 статьян 1-мĕш пайне çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава ирттернĕ чухне суйлав результачĕсем çинчен калакан протоколта, пĕтĕмĕшле таблицăра çавнашкал сасăлавăн даннăйĕсем пулмалла.";

14) 73 статьян 1-мĕш пайĕнче "авăн уйăхĕн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче, Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн черетлĕ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавне ирттерекен çулталăкра вара – çав суйлавра сасăламалли кун ирттереççĕ" сăмахсене "Федераци саккунĕн 10 статйин 3-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлав кунĕнче" сăмахсемпе улăштарас, çакăн пек çырса тăваттăмĕш çĕнĕ предложени хушса хурас: "Кун пек чухне Федераци саккунĕн 10 статйин 3-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлав кунĕччен пилĕк уйăх маларах пуçланакан тата палăртнă сасăлав кунĕ хыççăн пĕр уйăхран вĕçленекен тапхăрта çавнашкал хушма суйлавсене, асăннă сасăлав кунĕсĕр пуçне, урăх кунра

ирттерме юрамасть тата вĕсене Федераци саккунĕн 10 статйин 6–9-мĕш пункчĕсенче пăхса хăварнă положенисене шута илсе палăртнă кунра ирттерме палăртаççĕ.";

15) 74 статьян 1-мĕш пайĕн иккĕмĕш абзацĕнче "авăн уйăхĕн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче, Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн черетлĕ суйлаври Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавне ирттернĕ çул вара – çав суйлавра сасăланă кун" сăмахсене "Федераци саккунĕн 10 статйин 3-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлав кунĕнче" сăмахсемпе улăштарас, çакăн пек çырса виççĕмĕш çĕнĕ предложени хушса хурас: "Кун пек чухне Федераци саккунĕн 10 статйин 3-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлав кунĕччен пилĕк уйăх маларах пуçланакан тата палăртнă сасăлав кунĕ хыççăн пĕр уйăхран вĕçленекен тапхăрта çавнашкал хушма суйлавсене, асăннă сасăлав кунĕсĕр пуçне, урăх кунра ирттерме юрамасть тата вĕсене Федераци саккунĕн 10 статйин 6–9-мĕш пункчĕсенче пăхса хăварнă положенисене шута илсе палăртнă кунра ирттерме палăртаççĕ."

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ
80 №